Ачасен çуллахи канăвĕ

Лагере каяс тесен

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

– Хăш лагерьсене кайма пултараççĕ-ха путевка туянакансем?

– Майăн 7-мĕшĕнче эпир çуллахи вăхăтра ачасен сывлăхне çиреплетме тата канма услугăсемпе тивĕçтерессин уçă конкурсне ирттертĕмĕр. Ултă лагерь хутшăнчĕ унта. Эпир тăратнă условисене мĕнлерех пурнăçлассине тивĕçтерессипе вара конкурсра Шупашкар район территорийĕнче вырнаçнă «Чайка» тата хамăр район территорийĕнчи «Березкăпа» «Утес» лагерьсем çĕнтерчĕç. Çак виçĕ лагерьте канĕç те çуллахи вăхăтра пирĕн районти ачасем.

Ачасем каникул вăхăтне усăллă ирттерччĕр тесе ашшĕ-амăшĕн тăрăшмалла. Пирĕн район валли уйăрса панă укçатенкĕпе усă курмаллах. Сахал тупăшлă, йывăр лару-тăруллă, нумай ачаллă çемьесенчи ачасене тата риск ушкăнне кĕрекен ачасене лагерьсене ямаллах.

Заявленисене май уйăхĕ вĕçлениччен йышăнатпăр. Ку ыйтупа тимлесех ĕçлетпĕр. Республика шайĕнче çак ыйтăва Министрсен Кабинечĕн председателĕ Н. Суслонова контрольлесе тăрать.

Ыйтусемпе районти вĕрентӳ пайне пымалла е тĕплĕнрех çак номерсемпе шăнкăравласа пĕлме те пултаратăр: 62-4-33 тата 62-0-92.

Н. НИКОЛАЕВА.

Паллă вăрманçă

Муркашсем Гузовский ĕçне малалла тăсаççĕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Шкулăн актовăй залĕнче вара хăнасем Б.И. Гузовский ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан электронлă презентацие пăхрĕç. Вăрманçă юбилейне хатĕрленсе ку тăрăхри Вăрманкассинчи пуçламăш шкул-садра 4 класра вĕренекенсем, «Кашлаччăрах Атăл çумĕнчи вăрмансем» проект хатĕрленĕ. Б.И. Гузовский ĕçне, çавăн пекех ку тăрăхра пурăннă Ф.А. Перлов ĕçне малалла тунине кăтартса пачĕç ачасем хăйсен ĕçĕнче. Халĕ çеç асăннă çут çанталăкăн аслă тусĕсем пекех вĕсем те юмансене йĕкелтен ĕрчетме шутлаççĕ. Маньчжури мăйăрĕн хунавĕсене пăхса тăраççĕ. Каштансем çитĕнтерме питомникра ятарлă вырăн уйăрасшăн. Федор Азадановичăн прапрамăнукĕ паян Ильинка шкулĕнче вĕренекен Тамара Перлова та мăн аслашшĕн ĕçне малалла тăсассипе проект хатĕрленĕ.

– Ачасене мĕн пĕчĕкрен çут çанталăка юратма вĕрентетпĕр пулсан, пирĕн тăван ен тасарах та пуянрах пулас шанчăк пур-ха, – терĕ Юрий Александрович.

– Ачасем, çак куна манса ан кайăр. Вăл сире ĕмĕр тăршшĕпех хамăр тăрăхшăн, çут çанталăк илемĕшĕн тăрăшма хавхалантартăр.

Хăнасем Б.И. Гузовский ĕçне малалла тăсассипе Муркашсем çапла тăрăшнипе çав тери кăмăллă пулчĕç.

– Паян Муркаш районĕнче пурăнакансем, ачасем çут çанталăка епле юратнине, вăрманçăна вĕсем асра тытнине, унăн ĕçне малалла тăсассипе çине тăрса ĕçленине куртăмăр. Чăннипех те çав тери кăмăллă пулчĕ пире, – терĕ министра пулăшаканĕ.

Ун хыççăн пурте юмансен Б.И. Гузовский чĕртнĕ культурисен лаптăкĕнче пулса курчĕç. Каласа хăвармалла, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2001 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн 703 çакнашкал лаптăка республика шайĕнчи çут çанталăк палăкĕ пулса тăнине палăртнă.

Хăнасем çак кун çавăн пекех Б.И. Гузовские асăнса лартнă обелиск умне чечек çыххисем хучĕç. Малашне Б.И. Гузовский çуралнă кунĕнче майăн 5-мĕшĕнче тата Вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсен кунĕнче кунта чĕрĕ чечексем хурасси, митинг ирттересси ырă йăлана кĕрессе палăртрĕç. Хăнасем чи ватă юман патĕнче те пулчĕç. Юлашкинчен Тренккăри Культура çурчĕ çумĕнчи художество пултарулăх ушкăнĕ илемлĕ юрă-ташăпа савăнтарчĕ.

Л.ПАВЛОВА.

Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ

Шкулчченхи вĕрентӳ сферинче пулăшу ĕçĕсемпе усă курмалли майсене пысăклатмалли мерăсем çинчен

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Чăваш Республикинчи муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнчи тата муниципалитетсен харпăрлăхĕнчи, çав шутра Чăваш Республикин патшалăх унитари предприятийĕсен, муниципалитетсен унитари предприятийĕсен тата Чăваш Республики çĕр процент хутшăнакан, Чăваш Республикин патшалăх унитари предприятийĕсен тытăмне улăштарса туса хунă акционерсен уçă обществисен балансĕнчи çуртсене вĕсенче шкулчченхи вĕрентӳ учрежденийĕсене вырнаçтарас тĕллевпе инвентаризацилемелле;

Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенкин шучĕпе 50 процентран кая мар виçепе укçа уйăрмалли тӳпене çирĕплетсе Чăваш Республикин республика бюджечĕн тата вырăнсенчи бюджетсен шучĕпе муниципалитет пĕрлешĕвĕсен территорийĕсенче шкулчченхи вĕрентӳ учрежденийĕсен строительстви (реконструкцийĕ) валли пĕрле укçа уйăрмалли механизм хатĕрлемелле;

шкулчченхи вĕрентӳ учрежденийĕсен ĕçченĕсене ĕçшĕн тӳлемелли отрасль тытăмне тишкермелле, ăна ĕçе кĕртнĕ чух вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тунă çитменлĕхсене тупса палăртмалла, унпа усă курас енĕпе методика пулăшăвĕ памалла;

ача çуратасси ӳснине тата шкулчченхи вĕрентĕвĕн пулăшу ĕçĕсем кирлине шута илсе – кирлĕ пулсан муниципалитет пĕрлешĕвĕсене шкулчченхи вĕрентӳ учрежденийĕсене тытса тăлана тата ĕçшĕн тӳлемелли çĕнĕ системăпа усă курма хушма финанс пулăшăвĕ кӳмелли майсене пăхса тухмалла;

Чăваш Республикинчи муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле шкулчченхи вĕрентĕвĕн пулăшу ĕçĕсене кӳмелли, шкулчченхи вĕрентĕвĕн пулăшу ĕçĕсен муниципалитет заданине (саккасне) йĕркелемелли социаллă стандартсене хатĕрлесе пурнăçа кĕртессине тивĕçтермелле;

Çак Указ требованийĕсене Чăваш Республикин «Чăваш Республикин 2010 тата планпа пăхнă 2011 тата 2012 çулсенчи республика бюджечĕ çинчен» саккунне черетлĕ хут улшăнусем кĕртнĕ, çавăн пекех Чăваш Республикин 2011-2013 çулсенчи республика бюджетне йĕркеленĕ чухне шута илмелле.

2. Чăваш Республикинчи муниципалитет районĕсен тата хула округĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене муниципалитет пĕрлешĕвĕсен территорийĕсенче шкулчченхи пурте усă куракан вĕрентӳпе тивĕçтерессине йĕркелемелли полномочисене тухăçлă пурнăçлассине тивĕçтерме сĕнес.

3. Çак Указ ăна официаллă майпа пичетлесе кăларнă кунран вăя кĕрет.

Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.

Шупашкар, 2010, çу, 17, 61 №.

Районăн паллă çыннисем

Телейлĕ хĕрарăм

Муркаш районĕнче Надежда Кондукторовăна палламан çын çук та пулĕ. Вăл алла хут купăс тытсан, ташша пĕлмен çын та ташă картине тухать. Уяв тени те таврара унсăр сайра иртет. Пултаруллă хĕрарăма пур çĕре те кăмăлласа йыхравлаççĕ. Çак маттур хĕрарăмăн çур ĕмĕрхи юбилейне нумаях пулмасть Москакассинчи Культура çуртĕнче чаплăн паллă туса ирттертĕмĕр.

Асăннă вăхăтра Н. Кондукторовăна саламлама Культура çурчĕ хăнасемпе тулса ларчĕ. Зала пуçтарăннă халăх ура çине тăрса чылайччен алă çупса кĕтсе илчĕ юбиляра.

Уява «Колокольчик» ача садĕнче ĕçлекенсем уçрĕç. Хыççăн вара Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ М. Пушкин Н. Кондукторова пирки каласа пачĕ. Чăн малтанах Надеждăна çуратса ӳстернĕ амăшĕ яланах вăр-вар та ĕçчен хĕрарăм пулнине палăртрĕ вăл. Улми улмуççинчен аякка ӳкмен иккен.

Уява ертсе пыракансем Н. Кондукторовăн пурнăçĕ çинчен шӳтлесе сăвăласа-юрласа каласа пачĕç.

Хастар хĕрарăма саламлама хăнисем те килсех тăчĕç. Район администрацийĕн пуçлăхе Ю. Иванов, культура пайĕн ертӳçи А. Андреева, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Данилов...

Чăнах та таврара хут купăспа вылякан хĕрарăмсем питех те сайра пулнине пĕлтерчĕ район пуçлăхĕ. Надеждăна çитекенни вара çук та терĕ. А. Андреева та ун пирки чылай ăшă сăмах каларĕ, культурăра çавăн пек маттур хĕрарăмсем ĕçленишĕн тав турĕ. В. Данилов хăйĕн амăшĕ Домна Никифоровна Токшикри «Тăванлăх» халăх ушкăнне йĕркеленĕ ĕçе малалла тăсса пынăшăн Н. Кондукторовăна тав турĕ, малашне те пысăк ăнăçусемпе ĕçлесе пыма сĕнчĕ. Юбиляра юрăпа саламласа парне парса чыс турĕ. Хăна хыççăн хăна хăпарчĕ сцена çине: Мăн Токшикри «Тăванлăх» фольклор ушкăнĕ, Катькасри «Çăлкуç», Кашмашри халăх театрĕн артисчĕсем тата ытти нумай-нумай хăна.

Мухтанмалăх, савăнмалăх майĕ те пур Надежда Максимилиановнăн. Мăшăрĕпе Анфир Николаевичпа хĕрпе ывăл пăхса çитĕнтерсе анлă çул çине кăларма ĕлкĕрнĕ. Паянхи кун иккĕшĕ те аслă пĕлӳ илеççĕ. Çак кунсенчех Кондукторовсен тата тепĕр пысăк савăнăç пулчĕ: юбилейпа пĕрлех вĕсем çĕнĕ пӳрт ĕçки ирттерчĕç. Çак пысăк та илемлĕ çурта туса пĕтерес тесе ашшĕ-амăшĕ кăна мар, ачисем те тăрăшсах ĕçлерĕç.

Паянхи кун чăннипех те савăнать Надежда Максимилиановна: ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртме пултарнишĕн, çемьере ăнланнишĕн, картиш тулли выльăх-чĕрлĕх усрама пултарнишĕн, хăйĕн юратнă ĕçĕ пулнишĕн.

Алăри хут купăс вара ăна яланах вăй-хал парать. Çавăнпах пулĕ ăна саламланă чух унăн савăнăç куççулĕ юха-юха анчĕ.

Сцена çине ăна саламлама ял халăхĕ те хăпарчĕ. Чылайччен пычĕ чаплă уяв. «Ку тăрăхра çакнашкал чаплă уяв пулманччĕ. Чăн та культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн хисеплĕ ятне тивĕç», – тесе хăнасем тулли кăмăлпа саланчĕç.

Г. ГОЛУБЕВА.

Çут çанталăкпа алла-аллăн

Йывăççем – пирĕн сывлăх хуралçисем

Хальхи вăхăтра вăрман çут çанталăка, сывлăхлă пурнăçа сыхласа хăвармалли тĕп мел шутланать. Çавна май хамăр пултарнă таран вăрмана сыхлас, унăн калăпăшне пысăклатас тĕллевпе тĕрлĕ ĕçсем туса ирттермелле.

Президент Çырăвĕпе килĕшӳллĕн Мăн Хураçкари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта вĕренекенсем те ырă ĕçе пуçăнчĕç. Ачасем çут çанталăка сыхлакан специалист Г. Симаков пуçарăвĕпе 400 яхăн хыр хунавĕ хатĕрлесе пачĕç. Мăн Хураçка тăрăхĕн вăрманĕсем уй лаптăкĕсене йышăнса сарăлса пыраççĕ. Мĕншĕн тесен хунавсене йĕркеллĕ ӳсме вырăн çителĕксĕр. Капла вара ачасем вĕсене ӳсме ирĕкрех вырăн туса пачĕç. Ешĕл хунавсем Мăн Хураçка тăрăхĕнчен Муркаш шкулне çул тытрĕç. Вĕсене унта юратса пăхса ӳстерсен хырсем чылай çул хушши çынсене сиплĕ сывлăш парасса шанас килет.

В. МИХАЙЛОВА.

Мăн Хураçка шкулĕ.

Астăвăм

Çăмăл марччĕ вăхăт ун чухне

Вăхăт иртнĕ май иртнĕ кунсене аса илес килет. Эпĕ халĕ ĕнтĕ 80 çул тултаратăп. Совет влаçĕ вăхăтĕнче çуралнă, вĕреннĕ, ĕçленĕ. Ытларахăшĕ, уйрăмах влаçра ларакансем, унченхи вăхăта халĕ хурлама пикенеççĕ. Анчах та эпĕ вĕсем çакăн пек хăтланни тĕрĕс тесе шутламастăп.

Эпĕ 1929 çулта çуралса колхозсем йĕркеленсе вăй илнĕ вăхăтра çитĕннĕ. Шкулта вĕреннĕ, институт пĕтернĕ, колхозра агроном пулса ĕçленĕ.

Муркашри вăтам шкултан 1947 çулта вĕренсе тухрăм. Çав çулах Шупашкарти ял хуçалăх институтне вĕренме кĕтĕм. Ăна 1952 çулта ăнăçлă вĕренсе пĕтерме пултартăм. Тĕрĕссипе каласан, ун чухне институтра вĕренме ямăх марччĕ. Малтанхи 2 курса вĕренсе пĕтернĕ çĕре общежитире пурăнма ирĕк панăччĕ, вĕренӳре ăнăçлă ĕлкĕрсе пыракансене уйăхсерен стипенди те паратчĕç. Хальхи вăхăтра вара вĕренӳ ытларах çĕрте тӳлевлĕ ĕнтĕ.

Институтран вĕренсе тухсан мана Мари Республикине ĕçлеме кайма направлени панăччĕ. Вĕренсе тухнисен ун чухне 3 çул хушши ĕçе янă вырăнта ĕçлемеллеччĕ. Эпĕ вара унта ĕçлеме каяймарăм. Хамăрăн пысăкланнă «Красное Сормово» колхоза килсен унăн ертӳçи А.М. Моисеев тӳрех мана ку колхозра агрономра ĕçлеме сĕнчĕ. Çав кунах мана ял хуçалăх министрĕ патне Шупашкара илсе кайрĕ, хамăр хуçалăхрах ĕçлеттересси пирки каласса татăлчĕ.

А.М. Моисеев ун чухне Чăваш Республикин Аслă Канашĕн депутачĕ пулнă. Вăрçă хыççăнхи çулсенче пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем йывăррăн аталаннă. Ĕç укçи сахал паратчĕç. Агрономсем те сахал шалупах ĕçлесшĕнех марччĕ. Вара мана колхозран МТС штачĕ çине куçарчĕç. Анчах укçине колхозранах тӳлесе тăратчĕç. Ку ĕç укçи çумне патшалăх райфо урлă хушса тӳлемелле турĕ: 1-мĕш çулне уйăхне 500 тенкĕ, 2-мĕш çулне 400 тенкĕ, 3-мĕш çулне 300 тенкĕ. Çавна май хуçалăхран ниçта тухса каймасăрах ĕçлеме тиврĕ.

Колхозра уй-хир ĕçĕсене пĕтĕмпе тенĕ пекех МТС тракторĕсемпе ытти техники тума пулăшатчĕ. Хуçалăхсен ертӳçисен вара МТС-ăн трактор бригадин бригадирĕпе каласса ĕç калăпăшне кăтартса ĕçлеттермелле пулнă, ĕç пахалăхне те вĕсемех йышăннă. Ĕçленĕшĕн кайран патшалăха укçан е тырăпа тӳленĕ.

Эпĕ ĕçлеме тытăннă вăхăтра МТС-ăн трактор бригадин бригадирĕ пулса И.В. Сучков ĕçлетчĕ. Пултаруллă механизаторччĕ, ертӳçĕччĕ вăл. Ĕçе пуçăнас умĕн вăл яланах колхоз правленине пырса агрономпа, бригадирпа, правлени членĕсемпе канашлатчĕ, мĕнле ĕçсем пурнăçласси пирки палăртатчĕ.

1956 çулта вара партин Тĕп Комитетне И.В. Сталин вилнĕ хыççăн Н.С. Хрущев ертсе пыма тытăнсан ял хуçалăхĕнче пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. МТС-ăн трактор бригадинчи техникăна хуçалăхсене сутма пуçăнчĕç.

Ун чухне пирĕн хуçалăха А.Н. Бардасов ертсе пыма пуçларĕ. А.М. Моисеев сывлăхĕ хавшанă пирки хăйне çак ĕçрен хăтарма ыйтса заявлени çырса пачĕ.

Çав вăхăтран тытăнса пĕтĕм техника колхозăн пулса юлчĕ. Колхоз кирлĕ техникăпа хăех усă курма тытăнчĕ. Техникăпа епле усă курнишĕн, ĕçсене пурнăçланишĕн, механизаторсене ĕçе йышăнса ĕçшĕн тӳлессишĕн трактор бригадин бригадирĕ, агроном, уй-хир бригадисен бригадирĕсем ответлă пулса тăчĕç.

Пирĕн «Красное Сормово» хуçалăха 7 пĕчĕк хуçалăха пĕрлештерсе йĕркеленĕ пулсан та, 1 трактор бригади кăна пулнă. Бригадирсем пулса П. Муравьев, К. Кузнецов, М. Блинов тата ыттисем ĕçленĕ.

1956 çулта МТС техникине хуçалăх çине куçарнă чухне трактор бригадине П.Г. Муравьев ертсе пыратчĕ. Хуçалăх çултан-çул вăй илсе çирĕпленсе пычĕ. 1970 çулта вара мана хуçалăхран районти ял хуçалăх управленине тĕп агрономра ĕçлеме куçарчĕç. Анчах та унта эпĕ нумай хушă ĕçлеймерĕм: 1971 çулта мана «Красное Сормово» хуçалăх ĕçченĕсем председателе суйларĕç.

1977 çулта пирĕн хуçалăх Пиккикассипе Пăсăрман ялĕсенчен тăракан «Аврора» хуçалăхпа пĕрлешсе пысăкланчĕ, Мулкачкассипе Тереç ялĕсенче пурăнакансем вара каялла уйрăлса «Восток» хуçалăх туса хучĕç.

1977 çултах Оринин ял Советне кĕрекен 3 хуçалăх – «Красное Сормово», «Восток» тата Атапай, Сентимĕр, Çеменкасси ялĕсене пĕрлештерекен «Заветы Ильича» пĕрлешсе çĕнĕ хуçалăх – районти чи пысăк хуçалăх йĕркелерĕç. Унăн ячĕ те курăмлă пулчĕ – «За коммунизм».

Анчах ĕмĕтленни пурнăçа кĕреймерĕ. 1983 çулта Мулкачкассипе Тереç ялĕсенче ĕçлесе пурăнакансем каллех уйрăлса «Восток» хуçалăх туса хучĕç. Председатель пулма вара Оринин ялĕн каччине, агроном пулса ĕçленĕ Олег Горшкова суйларĕç. Вăл хуçалăха 1994 çулччен ертсе пычĕ. «За коммунизм» хуçалăхра юлнисем вара хуçалăх ятне те улăштарчĕç, «Оринино» ят пачĕç ăна. Хальхи вăхăтра вăл – районти тăнăç аталанса пыракан хуçалăхсенчен пĕри.

Сăмах май, Оринин ял тăрăхне кĕрекен «Оринино» тата «Восток» хуçалăхсем иккĕшĕ те районта ăнăçлисем шутĕнче. Вĕсен çитĕнĕвĕсем те çук мар. Иккĕшне те вĕсене Тереç ялĕнче çуралса ӳссе хуçалăхсенче ĕçлесе ăс пухнă специалистсем, пĕр тăвансем Юрийпе Михаил Шишокинсем ертсе пыраççĕ.

А. КАЛИНИН, пенсионер.

Мулкачкасси ялĕ.